27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
21
ЮННУН
122(6617) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, Маннергейм линине татнине аслӑлатса пырса, Выборг патӗнчи ҫирӗплетнӗ районӑн тули тата шалти хунарӗсене тӑшман хирӗҫ тӑнине сӑнтерӗҫ те паян, июнӗн 20-мӗшӗнче ВЫБОРГ хулипе крепоҫне штурмласа туртса илнӗ.

Маннергейм линине татнӑ чухне тата ВЫБОРГ хулипе крепоҫне туртса илес ҫапӑҫусенче — ГУСЕВ генерал-полковник, ЧЕРЕПАНОВ генерал-лейтенанчӗн, АНИСИМОВ генерал-лейтенанчӗн, АЛФЕРОВ генерал-лейтенанчӗн, ТИХОНОВ генерал-лейтенанчӗн, ФАДЕЕВ генерал-майорӗн, БУСАРОВ генерал-майорӗн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорӗн, ЕЛШИНОВ полковникӗн, РАДЫГИН полковникӗн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн ОДИНЦОВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн МИХАЛКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЖДАНОВАН артиллеристӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВАН, ШПИЛЛЕР полковникӗн, ПРОЦЕНКО полковникӗн, КОВАЛЕВСКИЙ полковникӗн, СОКОЛОВ подполковникӗн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн РЫБАЛЬЧЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн САМОХИНАН, авиаци генерал-майорӗн АНДРЕЕВАН, инженерсен генерал-майорӗн ЩЕРБАКОВАН, СКОН полковникӗн, ХАТМИНСКИЙ полковникӗн, ГРЕСЬКОВ полковникӗн летчикӗсем тата инженерсен саперсен ҫарӗсем, БЫЧЕВСКИН инженерсен саперӗсем тата тухӑҫ.

Тупӑ сӗнтерӗве ялан палӑртса ҫӗнӗ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисене тата чаҫсене «ВЫБОРГСКИ» ятне пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратӑп.

Паян, июнӗн 21-мӗшӗнче, 0 сехет те 30 минутра хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, инҫет ҫарне тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Ленинград фрончӗн паттӑр ҫарӗсене, Маннергейм линине татнӑскерсене тата ВЫБОРГ хулипе крепоҫне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Пӗтӗ чаплӑ ҫапӑҫкаҫӗн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, Маннергейм линине татса Выборг хулипе крепоҫне туртса илнӗ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑшӑн ТАВ ТАВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗшӗн тата пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан ҫапӑҫусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫсене финн захватчиксене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июнӗн 21-мӗшӗ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Арми генералне Л. А. Говорова ҫар званийӗ—Совет Союз Маршалӗ ятне парасси ҫинчен

Арми генералне Леонид Александрович **Говорова** ҫар званийӗ — Совет Союз Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи июнӗн 18-мӗшӗ.

Хӗрлӗ Ҫар генералӗсене ҫар званийӗсем парасси ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн постановленийӗ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Аялта кӑтартнӑ ҫынсене СССР Верховный Совет Президиумӗн 1940 ҫулхи майӑн 7-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх тунӑ ҫар званийӗсем парас:

Генерал-полковник званине
Андрей Александрович **Жданова**,
Дмитрий Николаевич **Гусева**.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. СТАЛИН.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Ӗҫӗсене туса тӑраканӗ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи июнӗн 18-мӗшӗ.

Аслӑ шкулсем 1944—45-мӗш ҫулта

Совет Союзӗнче 1944—45-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче 622 аслӑ шкул ӗҫлемелле (ку шута ҫар шкулӗсем кӗмеҫҫӗ), ҫав шутра — индустри шкулӗсем — 124, транспортпа ҫыхӑну шкулӗсем — 27, ялхуҫалӑх шкулӗсем—69, медицина шкулӗсем — 58. Кӑҫал Совет Союзӗнчи аслӑ шкулсен пӗрремӗш курсӗсене 161.400 ҫынна вӗренме илеҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фронт ҫывӑхӗнчи аслӑ шкулсен пӗр пайӗ ӗҫлеме чарӑннӑ пулнӑ, аслӑ шкулсенчен хӑшне-пӗрне тылра тӑракан хайсем йышши шкулсемпе пӗрлештернӗ пулнӑ. Фашистла нимӗҫ оккупанчӗсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ районсене вӗсенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫав аслӑ шкулсенчен нумайӗшӗ ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫланӑ. Июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне 122 аслӑ шкула ҫӗнӗрен хута янӑ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Совет Союзӗнче ҫӗнӗрен 14 аслӑ шкул уҫнӑ. (ТАСС).

Заем вылявӗ

Июнӗн 18-мӗшӗнче Мускавра Виҫҫӗмӗш Пятилетка заемӗн (виҫҫӗмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 14-мӗш вылявӗ пулса иртнӗ. (ТАСС).

Промышленноҫпа транспорт ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене татӑклӑн пӗтерер

ВКП(б) Обком секретарӗн оборона промышленноҫӗ енӗпе ӗҫлекен заместителӗ С. М. Крылов юлташ ВКП(б) Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗнче тунӑ докладран

Ҫӗршывпа фронт интересӗсем промышленность работникӗсене продукци туса кӑларассине пӗр пӑркаланмасӑр ӳстерсе пыма, продукци пахалӑхне лайӑхлатса пыма хушаҫҫӗ. Ҫӗршывпа фронтӑн ҫав ӳссех пыракан ыйтӑвӗсене пӗтӗмӗшпех тивӗҫтерес тесен, ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартассишӗн, промышленность ӗҫӗн пур тӗслӗхӗсене те лайӑхлатассишӗн ҫине тӑрса кӗрешмелле. Хальхи вӑхӑтра партин XVIII-мӗш конференцийӗ продукцин хайне ларакан хакне йӳнетесси, хозрасчета ҫирӗплетесси, тирпейсӗрлӗхе татӑклӑн пӗтересси ҫинчен йышӑннӑ решенисем уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Республикӑри предприятисенчи хуҫалӑх руководителӗсемпе парторганизацисем вӗсем умне партнӑ задачӑсене мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ-ха?

ПРОМЫШЛЕННОҪӐН 1943 ҪУЛХИ ӖҪӖ

Республикӑри государство промышленноҫӗ пӗтӗм продукци туса кӑлармалли 1943 ҫулхи плана 100,7 процент, союзлӑ промышленность — 103,3 процент тултарнӑ. Республикӑна (федерацие облӑҫа) пӑхӑнса тӑракан промышленность кӑна хайӗн планне тултараймарӗ. Районри промышленноҫпа промысла кооперацийӗ плана ирттерсе тултарчӗҫ.

Нумай предприятисен коллективӗсем иртнӗ ҫулта производствӑра пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Ҫапла, сӑмахран, Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ пӗр завод, продукци туса кӑлармалли 1943 ҫулхи плана ноябрӗн 27-мӗшӗ тӗлне тултарса, ҫӗршыва планран ирттерсе 7 миллион тенкӗлӗх ытла изделисем панӑ. 1942 ҫулхипе танлаштарсан, завод продукци туса кӑларассине 46 процент чухлӗ ӳстернӗ, ҫӗнӗрен 15 тӗрлӗ изделисем туса кӑларассине алла илнӗ. Ку заводра плана пур изделисем енӗпе те тултарнӑ. Продукцин хайне ларакан хакне планпа пӑхнӑ 9 процент вырӑнне 15 процент чухлӗ йӳнетнӗ.

Ҫав ҫитӗнӳсене завод пӗтӗм коллектива плана тултарма чӑнласах большевикла мобилизацилени, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарни, производствӑн технологи процесне ҫӗнетсе лайӑхлатни, производствӑн ҫӗнӗ мощноҫӗсене ӗҫе янипе, шалти ресурссене мобилизациленипе тунӑ. 1943 ҫулхи Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура завод виҫӗ уйӑх хушшинче ВЦСПС-па Наркоматӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне ҫӗнтерсе илнӗ тата Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне 8 уйӑх хушши хӑй аллинче тытса тӑнӑ. Завод коллективӗн ҫитӗнӗвӗсене партипе правительство тивӗҫлипе хакларӗҫ. Завода Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑларӗҫ. Инженерла-техникла работниксемпе стахановецсен ӗҫре палӑрнӑ пысӑк йышне орденсемпе тата медальсемпе наградӑланӑ.

1943 ҫулхи плана ҫавӑн пекех Володин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод, Улатӑрти паровозсем юсакан завод, Шупашкарти табак фабрики, Вӑрмарти спортинвентарь фабрики тата ытти предприятисем те ирттерсе тултарнӑ.

Канашри вагонсем юсакан завод плана нумай мар ирттерсе пурнӑҫланӑ. Анчах, ҫакна каламалла: ҫав завод 1943 ҫулта, 1942 ҫулхипе танлаштарсан, пысӑк ӳсӗм тунӑ, ҫав ӳсӗм вӑл вӑрҫӑччченхи 1940 ҫулхи пӗтӗм продукци хисепӗ чухлӗ пулать. Пӗтӗмӗшпе илсен, 1943 ҫулта завод 1940 ҫулхинчен 4,4 хут ытларах продукци туса кӑларнӑ.

Союза пӑхӑнса тӑракан хӑшпӗр предприятисем — Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод, Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфь, Кошелев юлташ директор пулса ӗҫлекен завод, пир-авӑр фабрики плана тултараймарӗҫ.

Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод 1943 ҫулта Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура пӗр хутчен мар ҫӗнтернӗ, ҫапах та вӑл ҫулталӑкри программӑна пурнӑҫлаймарӗ. Плана тултарманнин тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри ҫакӑ пулса тӑрать: заводри хуҫалӑх руководителӗсемпе парторганизаци шалти мӗнпур ресурссемпе кирлӗ пек усӑ курман, коллектива плана тултарнӑ ҫӗре тивӗҫлипе мобилизацилемен, хайӗн электростанцине топливо парса тӑрас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнман. Ҫавна пула завод декабрьти плана тултармасӑр хӑварнӑ.

Канашпа Шупашкарти пир-авӑр фабрикисем, электроэнерги ҫителӗксӗр пулнӑ пирки, 1943 ҫулта ӗҫлеменпе пӗрех, вӗсем ҫӗршывпа фронта нумай пир-авӑр паман.

Вырӑнти промышленноҫпа промкоопераци иртнӗ ҫулта 1942 ҫулхинчен чылай лайӑхрах ӗҫлерӗҫ. Вырӑнти промышленность 1943 ҫулта отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа малтанхи хут, государство планне тултарчӗ, продукци туса кӑларассине, 1942 ҫулхипе танлаштарсан, 48 процент чухлӗ ӳстерчӗ. Ҫулталӑкри плана промкооперацин пур союзӗсем те тултарчӗҫ.

Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариачӗ, Полиграфпромышленность Управленийӗ тата ыттисем те плана начар мар пурнӑҫларӗҫ.

Вырӑнти тата коопераци промышленноҫӗн ӗҫне ертсе пырассине чылай хуласемпе районсенчи партипе совет организацийӗсем лайӑхлатрӗҫ. Ҫавна пула Канаш хулинче, Ишлей, Куславкка, Кувакино, Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрмар, Чкаловски, Елчӗк районӗсенче вырӑнти промышленность енӗпе те, ҫавӑн пекех тата коопераци промышленноҫӗ енӗпе те 1943 ҫулта плана ирттерсе тултарнӑ.

Анчах партин уйрӑм райкомӗсем вырӑнти тата коопераци промышленноҫӗн ыйтӑвӗсем енӗпе конкретно ӗҫлемен, предприятисемпе артельсен ӗҫне тимлӗреххӗн хутшӑнман, хуҫалӑх ыйтӑвӗсене татса парас ӗҫре предприяти руководителӗсене кулленех татӑклӑ пулӑшу парса тӑман. Ҫавна пула хӑшпӗр районсенчи предприятисемпе артельсем производство планӗсене уйӑхсеренех тултарса пыман.

Пӑрачкавпа Канаш районӗсенчи предприятисемпе артельсем уйрӑмах начар ӗҫленӗ. Ҫулталӑкри программӑна Хӗрлӗ Чутай, Шупашкар, Комсомольски тата ытти районсенчи предприятисемпе артельсем ҫителӗксӗр тӗслӗхсемпе вӗҫлерӗҫ.

ВӐРМАН ТАТА ЙЫВӐҪ КАСКАЛАКАН ПРОМЫШЛЕННОҪӐН ӖҪӖ

Вӑрҫӑ кунӗсем вӑрман промышленноҫӗн ӗҫне тӗпренех лайӑхлатма хушрӗҫ. Республикӑри вӑрман хатӗрлекен предприятисем специальнӑй йывӑҫ сортиментчӗсем, ҫавӑн пекех ҫирӗплетмелли тата суднӑсем тумалли йывӑҫсем хатӗрлесе туртса тарас ӗҫӗн хисепне виҫӗ хут ӳстерчӗҫ. Вӑрман хатӗрлевӗнче чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлесси, ҫавӑн пекех тата предприятисен нушисене тивӗҫтересси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

1943 ҫулта вӑрман хатӗрлемелли плана вӑрман промышленноҫӗ тӑрӑх касса хатӗрлес енӗпе — 101 процент, туртса тарас енӗпе — 95 процент тултарнӑ.

Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗ тата вӑрман хатӗрлекен ытти организацисем енӗпе плана тултарманнин сӑлтавӗ — механизациленӗ парк (тракторсемпе автомашинӑсем) простой нумай тунинче, ӗҫ вӑйӗ улшӑнса тӑнинче тата ӗҫ тухӑҫлӑхӗ начар пулнинче.

Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсенче хайсен кадрӗсемпе, ҫавӑн пекех тата хайсен транспорчӗпе ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ. Предприятисенчи рабочисен пӗтӗм хисепӗнчен 24 проценчӗ ҫеҫ вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех вӑрман турттарнӑ ҫӗрте те мӗнпур лашасенчен виҫҫӗмӗш пайӗпе кӑна усӑ кураҫҫӗ. Ытти рабочисемпе лашасем иккӗмӗш вырӑнта тӑракан ӗҫсенче ӗҫлеҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлемелли кӗрхипе хӗллехи тапхӑрта уйрӑмӑнах Кирерн, Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вӑрман пункчӗсем, Улатӑрти, Алтышевӑри, Шӑмӑршӑри вӑрманпромхозсем тата Сӗмӗрлери вӑрман хуҫалӑхӗ начар ӗҫленӗ. Мӗншӗн тесен ҫав предприятисен директорӗсем касмалли вӑрман фондне вӑхӑтра уйӑрса хуман, рационализациленӗ ҫулсемпе усӑ курман, рабочисем валли кирлӗ пек условисем туса паман, вӑрманта ӗҫлеме пыракансене инструментсем ҫителӗклӗ тупса паман. Ҫавна пула вара ӗҫ вӑйӗ те пӗрмаях улшӑнса тӑнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те начар пулнӑ.

Улатӑр, Шӑмӑршӑ, Хӗрлӗ Чутай тата ытти хӑшпӗр райкомсем вӑрманпромхозсемпе механизациленӗ вӑрман пункчӗсен ӗҫӗсене ҫителӗксӗр тӗрӗслесе тӑнӑ, вӗсене плана пурнӑҫа кӗртме пулӑшман, ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман.

Вӑрман хатӗрлемелли плана туртарманни республикӑри районсенчен ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗр мобилизацилениипчен нумай килнӗ. Чылай районсен руководителӗсем ҫав ӗҫе тивӗҫлипе хакламан. Ӗҫ вӑйӗ мобилизацилемелли плана уйрӑмӑнах Элӗк, Сӗнтӗр, Красноармейски, Чкаловски тата Елчӗк районӗсем начар пурнӑҫланӑ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Промышленность тата лайӑхрах ӗҫлеме тивӗҫлӗ

Республикӑри промышленность иртнӗ 1943 ҫулта хайӗн производство планне анӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртрӗ. Ҫапла, плана государство промышленноҫӗ 100,7 процент, союзлӑ промышленность 103,3 процент, районсене пӑхӑнакан вырӑнти промышленность 124,5 процент тата коопераци промышленноҫӗ 107,4 процент тултарнӑ. Промышленноҫӑн чылай отраслӗсем кӑҫалхи производство планне те анӑҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ.

Анчах та республикӑри промышленность, пӗтӗмӗшпе илсен, 1943 ҫулта тунӑ ҫитӗнӳсене малалла ӳстерсе пыраймасть-ха. Кӑҫалхи пилӗк уйӑхри плана государство промышленноҫӗ 92,9 процент, республикӑна тата районсене пӑхӑнса тӑракан промышленность 89,3 процент, коопераци промышленноҫӗ 88,2 процент кӑна тултарнӑ. Артельсенчен нумайӗшӗсем хайсен планне тултараймаҫҫӗ. Мӗншӗн-ха промышленноҫӑн асӑннӑ отраслӗсем хайсен планне ҫавӑн пек кая юлса тултараҫҫӗ?

ВКП(б) Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗ, республикӑри промышленноҫпа транспорт 1943 ҫулта тата 1944 ҫулӑн малтанхи пилӗк уйӑхӗ хушшинче мӗнле ӗҫлени ҫинчен ВКП(б) Обком секретарӗн оборона промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Крылов юлташ тунӑ доклада сӳтсе явса, предприятисен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртрӗ. Предприятисенче вырӑнти ресурссемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ. Оборудованисем простой тӑваҫҫӗ, чӗртаварсем, топливо тата электроэнерги ытлашши расходлаҫҫӗ. Чылай предприятисенче ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес, продукци пахалӑхне лайӑхлатас тата унӑн хакне йӳнетес, рабочисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас, социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилес енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн республикӑри промышленноҫӑн лайӑх ӗҫлеме пур условисем те ҫителӗклӗ. ВКП(б) Обкомӗн пленумӗ промышленноҫпа транспорт ӗҫне ҫак ҫывӑх вӑхӑтрах тӗпренех лайӑхлатма татӑклӑ кӑтартусем парса хӑварчӗ. Пленум, промышленноҫра ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк ҫитменлӗхсем пулнине палӑртса, предприятисен руководителӗсене ӗҫе сдельнӑй йӗркепе тӳлессине анлӑн сарса пыма, техника вӗренӗвне вайлатма, рационализаципе изобретени ӗҫне ҫӗклеме, инструментсен хуҫалӑхне лайӑхлатма, топливӑпа чӗртаварсем турттарас ӗҫе механизацилеме хушса хӑварчӗ. Продукци туса кӑларассине ӳстерес, оборудованисемпе, кадрсемпе туллин усӑ курас ӗҫре предприятисене поточнӑй метод ҫине куҫарни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа та партипе хуҫалӑх работникӗсен ҫав паха метода пур ҫӗрте те сарса пымалла.

Обком пленумӗ парти организацийӗсене энергетика хуҫалӑхне лайӑхлатас, электростанцисене пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлекен тӑвас, вӗсене хӗллехи вӑхӑтра лайӑх ӗҫлеме хатӗрлес тата вӗсем валли топливо ҫителӗклӗ хатӗрлес тӗлӗшпе татӑклӑ мероприятисем йышӑнма хушса хӑварчӗ.

Вырӑнти топливо промышленноҫӗн управленийӗн тата торф предприятийӗсен руководителӗсен тивӗҫӗ — 1944 ҫулта торф кӑлармалли плана пӗтӗмпех тата вӑхӑтра туртарасси шутлать. Ҫакна тума механизмсемпе туллин усӑ курмалла, ӗҫе тӗрӗс йӗркелемелле. ВКП(б) райкомӗсемпе горкомӗсен, райсовет исполкомӗсен тата Халӑх Комиссариачӗсемпе предприяти руководителӗсен, ҫулталӑкри вӑхӑтра топливо хатӗрлесе туртарассине анлӑн сарса пырса, 1944—1945 ҫулхи хӗл валли топливо ҫителӗклӗ таран туртарса хумалла тӑвас пулать.

Пирӗн вырӑнти промышленноҫпа промысла коопераци промышленноҫне малти вырӑна кӑларма кирлӗ майсемпе условисем ҫителӗклӗ таранах пур. ВКП(б) горкомӗсемпе райкомӗсен тата хула совет исполкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен задачи — промышленноҫӑн ҫав отраслӗсем мӗншӗн кая юлса пынине тӗплӗн тишкерсе тухса, вӗсене халех татӑклӑ пулӑшу парасси пулать. Вырӑнсенчи партипе совет организацийӗсен вырӑнти тата промысла коопераци промышленноҫне ӗҫ вӑйӗ тупса парас енӗпе, рабочисен пурнӑҫ условийӗсене юсас, транспорт хуҫалӑхне йӗркелес, чӗртаварсемпе материалсене туртарас енӗпе практикӑллӑ пулӑшу памалла. Вӗсен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла. Рабочисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пымалла. Промысла коопераци енӗпе вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗн руководителӗсем квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес ӗҫе вӑйлатма, ӗҫе хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксене ытларах явӑҫтарма тивӗҫлӗ.

Пленум чугун ҫул тата шывҫул транспортӗнчи партипе хуҫалӑх работникӗсене партиллӗ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатма, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарма, дисциплинӑна ҫирӗплетме, ҫапла вара транспортӑн пӗтӗм службисене лайӑх ӗҫлекен тума, транспорт предприятийӗсене хӗллехи вӑхӑт валли лайӑх хатӗрлесе ҫитерме хушса хӑварчӗ. Чугун ҫулпа шывҫул транспорчӗсене ҫирӗп график тӑрӑх ӗҫлекен тумалла.

Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен вӑрман, топливо промышленноҫӗ валли тата промышленноҫӑн ытти отраслӗсем валли ӗҫ вӑйӗ мобилизацилемелли плана вӑхӑтра та пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртсе пымалла тӑвас пулать. Ҫакӑнпа пӗрлех вӗсен предприяти руководителӗсене рабочисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатма, предприятисене хӗле хатӗрлеме пулӑшмалла. Промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенче социализмлӑ ӑмӑртӑва, ӗҫӗн ҫӗнӗ меслечӗсене сарасси ҫине, политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе большевикла организацилесси ҫине тимлӗн саваранса пӑхмалла. Парти организацийӗсен, малта пыракан стахановецсене парти ретне явӑҫтарса, промышленноҫпа промысла кооперацийӗн пысӑк мар предприятийӗсенче парторганизацисен йышне ӳстерес задачӑна пурнӑҫа кӗртмелле.

Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнче кӑларнӑ приказӗ совет ҫыннисене ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарчӗ. Промышленноҫпа транспортри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем, аслӑ ҫулпуҫӑн приказне ответлесе, хайсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Партипе совет организацийӗсем тата хуҫалӑх руководителӗсем, пӗтӗм рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата служащисене умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн хастарлӑн кӗрешме мобилизацилесен, пирӗн республикӑри промышленность хайӗн ӗҫне кӗске вӑхӑтрах лайӑхлатма пултарать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 19-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

КАРЕЛИ перешеекӗнче ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пырса, МАННЕРГЕЙМ ЛИНИНЕ ТАТСА КӖНӖ ВЫРАНА 50 КИЛОМЕТР ТАРАН—МУОЛАРАН ПУҪЛАСА ФИНН ЗАЛИВНЕ ҪИТИЧЧЕН САРНӐ. Июнӗн 19-мӗшӗнче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн хирӗҫ тӑмалли **СУММА, ЛЕЙПЯСУО, МУОЛА** ятлӑ пысӑк узелӗсене йышӑннӑ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 70 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра **РЕМПЕТТИ, ВАТНУОРИ, ИОХАННЕС, РОККАЛА (ВЫБОРГ** хулинчен 16 километр кӑнтӑртарахра), **ЛИППОЛА, ИЛЯКЮЛЯ, ХУМОЛА, КЯМЯРЯ, КУСА, ИОКИСУ, КИВИНИЕМИ, ЛАПИНЛАХТИ** ятлӑ ялсем тата **ИОХАННЕС, ЛЕЙПЯСУО, КЯМЯРЯ, ПЕТЯЯРВИ** ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем **СУВАНТО-ЯРВИ** тата **ВУОКСИ-ЯРВИ** кӳллисен кӑнтӑр хӗррисене тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем пулман.

Июнӗн 18-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 36 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекӗнче Ленинград фрончӗн ҫарӗсем ҫаплах анӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Пирӗн ҫарсем Маннергейм линине татса кӗнӗ вырӑна 50 километр таран — Муоларан пуҫласа (Муолан-Ярви кӳллинчен ҫурҫӗртерехре) Финн заливӗ хӗррине ҫитиччен сарнӑ. Совет танкисчӗсемпе пехотинецӗсем, ҫав тери хӑвӑрт пыра-пыра ҫапса, финсен хирӗҫ тӑмалли нумай вӑхӑтлӑха вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ Сумма, Лейпясуо, Муола ятлӑ узелӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла йышӑннӑ. Пӗр стрелковӑй соединенин чаҫӗсем анӑҫлӑ маневр тунӑ та тӑшмана хӑватлӑн пырса ҫапнӑ. Совет боецӗсем 1.000 фина ытла пӗтерсе тӑкнӑ, финсен 2 полкӗн ялавӗсене, 3 танк, 19 тупӑ тата ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан автомашинӑсемпе лавсем нумай тытса илнӗ. Пӗр чаҫри танкистсем тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ та, финсен темиҫе батальонне тата дивизи штабне аркатса тӑкнӑ. Апат-ҫимӗҫпе боеприпассен 4 складне, 78 автомашина, 600 велосипед, 200 лаша тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ тытса илнӗ. Тепӗр районра танкистсем финсен оборонин узелне пӗтернӗ чухне танксене пемелли 15 тупӑ тата боеприпассем нумай тытса илнӗ.

Пирӗн авиаци, наступлени туса пыракан ҫарсене пулӑшса пырса, тӑшманӑн опорнӑй пункчӗсемпе ҫулйӗрӗсене йышлӑн пыра-пыра ҫапнӑ. Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн летчикӗсем финсен Выборг заливӗнчи суднисем ҫине кунӗн-ҫӗрӗн бомбӑсем тӑкнӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе тӑшманӑн 6 транспорчӗ шыва путнӑ. Унсӑр пуҫне, флот авиацийӗ 4 десант баржине, 3 буксира тата хуралта ҫӳрекен 3 катера шыва путарнӑ. Финсен шыв тӑрӑх ҫӳремелли ытти нумай хатӗрӗсене сиенленӗ. Тӑшман хайӗн суднисене Выборг заливӗнчен кӑларса кайма хӑтланнӑ. Пирӗн авиаци финсене ҫак ӗҫе тума активлӑн кансӗрленӗ. Паян пирӗн артиллеристсем пӗр ҫурутрав ҫинчен тӑшманӑн Выборг заливӗнчен тухса тарма хӑтланакан суднисене пересҫӗ.

Совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче кун-каҫа нимӗҫсемпе финсен 22 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Мозырь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн разведчиксем лейтенант Лейзин командир пулса ертсе пыракан ушкӑнӗ ҫӗрле нимӗҫсен ҫирӗплетнӗ пункчӗ патне пырса тухнӑ. Совет боецӗсем тӑшмана сасартӑк тапӑннӑ та 38 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Унтан, пӗр нимӗҫ унтер-офицерне тыткӑна илсе, хайсен чаҫне тӗрӗс-тӗкелех таврӑннӑ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронтра разведчиксен ушкӑнӗ, Учаев старши сержант ертсе пынипе кӗтмен ҫӗртен тӑшман траншейисене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ, 4 нимӗҫе вӗлернӗ, 20 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнӗ нимӗҫсене штаба янӑ та разведчиксем тӑшманӑн артиллери батарейин позицийӗсене атакӑланӑ. Румын артиллерисчӗсем ҫапӑҫмасӑрах тарса пӗтнӗ, хайсен туписене пӑрахса хӑварнӑ. Пирӗн разведчиксем танксене пемелли 3 юсавлӑ тупӑ тытса илнӗ те хайсен подразделенине илсе пырса панӑ.

* * *

Пирӗн авиаци июнӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Ҫурҫӗр Норвегири Киркенес порчӗпе хулине тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула 10 тӗлте пушар тухнӑ. Портра пӗр танкерпа 3 каботаж суднине пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 7 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн торпедӑсем пӑрахакан самолечӗ Рига заливӗнче нимӗҫсен 6.000 тонна таякан суднине шыва путарнӑ.

* * *

Румынсен 14-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ сержант Думитру Т. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «1941 ҫулта эпӗ румынсен 21-мӗш пехотнӑй дивизийӗнче тӑнӑ, Одесса патӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ. Одесса районӗнче ҫав дивизие сахалтан та 4 хутчен ҫӗнетрӗҫ. Кайран эпӗ румынсен 14-мӗш пехотнӑй дивизине лекрӗм. Кӑшт вӑхӑт иртсен вара каллех фронта лекрӗм. Эпир темӗн чухлӗ нуша тӳссе каялла чакрӑмӑр. Нимӗҫсене курайман пирки эпӗ хамӑр чаҫран тартӑм та ялсенче пытанса ҫӳрерӗм. Ҫак кунсенче эпир, 27 ҫын, Хӗрлӗ Ҫар енне куҫрӑмӑр».

Тирасполь хули районӗнче Хӗрлӗ Ҫар енне румынсен 4-мӗш горнострелковӑй дивизийӗнчи салтаксен ушкӑнӗ каҫнӑ. Ҫав салтаксенчен пӗри, Ион Р. ятли, ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫсем Румыни халӑхне ҫаратаҫҫӗ, тырпула, выльӑх-чӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк тата ытти хаклӑ япаласене те турта-турта илеҫҫӗ. Пӗр ялта эпӗ румынсен 15-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи салтаксемпе нимӗҫсен тылри пӗр чаҫӗнчи салтаксем хушшинче хӗҫпӑшаллӑ тытӑҫу пулса иртнине куртӑм. Нимӗҫсем Румыни хресченӗсенчен вӗсен выльӑх-чӗрлӗхне туртса илсе ҫӳренӗ. Пӗр нимӗҫ салтакӗ хайӗн пӗртен пӗр ӗнине нимӗҫсене пама килӗшмен хӗрарӑма хӗнесе тӑкнӑ. Румын ефрейторӗ нимӗҫ салтакне ҫапса янӑ та унтан пӑрахса кайма хушнӑ. Вара ҫав нимӗҫ хайӗн пистолетне туртса кӑларнӑ та румын ефрейторне ҫавӑнтах персе пӑрахнӑ. Тарӑхса ҫитнӗ румын салтакӗсем нимӗҫсене автоматсемпе пеме пуҫланӑ. Ҫав тытӑҫура 20 нимӗҫ салтакне вӗлернӗ е амантнӑ».

С. М. КРЫЛОВ юлташ доклачĕн вĕçĕ

Парти райкомĕсемпе вăрман хатĕрлекен предприяти руководителĕсен паянхи хисеплĕ задачи вăл — вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ мобилизацилесси пулать. Ĕç вăйĕпе тулли усă курас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Вăрман касакансемпе турттаракансем валли лайăх ĕçлеме условисем туса парас пулать, вĕсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе тата социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. Вăрман хатĕрлемелли тата турттармалли, уйрăмах сортлă йывăççем тата чугун çул валли вута хатĕрлемелли плансене пĕтĕмпех тултармалла.

Вăрман промышленность предприятийĕсен ĕçне татăклăн лайăхлатмалла. Вĕсем иртнĕ çулта та, çавăн пекех кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче те хăйсен планĕсене тултарайман, малашне кун пек пулмалла мар.

1944—45 çулхи хĕл валли топливо, вутă тата торф халех хатĕрлесе турттарма тытăнмалла. Электростанцине торф парса тăракан Атăл леш енчи торф предприятине лайăх ĕçлекен тăвас пулать. Вăл хăйĕн планне ăнăçлăн тултарма тата ирттерсе тултарма пултартăр.

ПРОМЫШЛЕННОÇĂН 1944 ÇУЛХИ ПИЛĔК УЙĂХ ХУШШИНЧИ ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

Мĕнле ĕçлеççĕ-ха кăçал республикăри предприятисем?

Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ çĕнĕ çитĕнÿсем турĕ. Производствăн пĕр пайне поточнăй метод çине куçарнипе пула, производство технологине çĕнетнипе пула завод пилĕк уйăхри плана чылай ирттерсе тултарчĕ. Пилĕк уйăхри плана Слуцкий юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод та ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ.

Анчах та чылай пысăк предприятисем ĕç хăвăртлăхĕсене чакарни палăрать. Пилĕк уйăхри плана Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем, Канашри вагонсем юсакан завод, Сĕмĕрлери «Большевик» тата ытти чылай предприятисем тултарайман.

Асăннă предприятисен ĕç условийĕсенче 1943 çултанпа нимĕнле улшăнусем те пулман. Апла пулсан, плана тултарманнин сăлтавĕ пĕтĕмпех çав предприятисенчи партипе хуçалăх работникĕсем ертсе пырас ĕçе сÿрĕклетнинче пулать. Хăшпĕр предприяти руководителĕсен 1943 çулта тунă çитĕнÿсемпе пуçĕсем çаврăнма тытăннă пулас.

Пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри государство промышленноçĕ пилĕк уйăхри производство планне 93 процент çеç тултарнă. Çапла вара çĕршыва нумай миллион тенкĕлĕх продукци парайман.

Вырăнти тата кооперации промышленноçĕн руководителĕсем те 1943 çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе хăвараймарĕç. Облаçа тата районсене пăхăнса тăракан промышленность пилĕк уйăхри плана 89,8 процент, кооперации промышленноçĕ 88,2 процент çеç тултарнă. Пилĕк уйăхри плана икĕ отрасль — полиграфипе апат-çимĕç промышленноçĕсем кăна тултарнă.

Пилĕк уйăхри плана вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ, стройматериалсен промышленноçĕн управленийĕ, Чăвашрыбтрест, вырăнти топливо промышленноçĕн управленийĕ тата кооперации промышленноçĕ тултарайман. Çапла вара вĕсем 1944 çулхи плана тултарассине хăрушлăх умне тăратрĕç.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ хăйĕн ĕçне нумай сÿрĕклетнĕ. Вăл пилĕк уйăхри плана 88 процент çеç тултарнă. Вырăнти промышленноçăн план тăрăх 36 тĕрлĕ издели туса кăлармалла пулсан, вăл 11 тĕрлĕ издели тăрăх кăна задание пурнăçа кĕртсе пырать. Вырăнти чĕртаварсенчен туса кăлармалли изделисем тăрăх та, сăмахран, йĕлтĕрсем, йывăç кашăксем, катка-пичкесем, тăмран тунă чашăк-чÿлмексем, сĕтел-пукансем тăвас енĕпе плана тултарайман. Вырăнти промышленность предприятийĕсенче тикĕт, пăта, йывăç тĕплĕ пушмаксем тума халĕ те тытăнман.

Кооперации промышленноçĕ те хăйĕн ĕçне сÿрĕклетнĕ. Промысла кооперацийĕ енĕпе пилĕк уйăхри плана 88 процент çеç тултарнă. Промысла кооперации союзĕсенчен пĕри те хăйĕн планне тултарман. Çавна пула вара пилĕк уйăх хушшинче фронтпа çĕршыва 3 миллион тенкĕлĕхе яхăн продукци парса çитереймен. Артельсенче 46 тĕрлĕ япала туса кăлармалла пулсан, задание 19 тĕрлĕ япала тăрăх çеç тултарнă. Промартельсенче смола, спирт-сырец, уксуспа кальци порошокĕсем, известь, шăл тасатмалли порошок, гуталин тата ытти çавăн пек япаласем тума пачах тытăнман.

Инвалидсен кооперацийĕн артелĕсенче те ĕçсем кăшт кăна лайăхрах.

Пирĕн республикăри промышленноçăн ĕçне сывăх вăхăтрах тĕпренех лайăхлатмалла. Предприятисенчи хуçалăх тата парти руководителĕсем, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсем йывăрлăхсене çĕнтерме татăклă мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Çĕршыв умĕнче парăмра пулни вăл айăпа кĕни, халĕ вара, отечественнăй вăрçăн ответлă тапхăрĕнче, икĕ хут ытларах айăпа кĕни пулать.

ТРАНСПОРТА ПĔР ЧАРĂНМАС ĂР, ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕН ТĂВАР

Чугун çул работникĕсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ.

Канашри депо коллективĕ, Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавасланса, хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Май уйăхĕнчи ĕç итогĕсем тăрăх, çав депо коллективĕ Хусан чугун çулĕ çинче пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, кусса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав тата пĕрремĕш премии илчĕ. Унта паровозсем çÿретмелли талăкри плана 24 километр, техникăллă хăвăртлăх планне 3 километр ирттерсе тултарнă. Паровозсене сыса юсамалли плана та 4 процент ирттерсе тултарнă. Юсав мар паровозсен хисепне нормăпа пăхнинчен ытларах чакарнă. Паровозсем çул çине графикпа тăрăх тухаççĕ. Депори машинистсем хушшинче уйрăмах орденоносец Николаев, çавăн пекех тата Крестников, Фомин, Константинов, Доронин тата ытти юлташсем палăраççĕ. Вĕсем паровозсене хăйсен вăйĕпех юсаççĕ.

Çавăн пекех Вăрмар станцийĕн коллективĕ те начар мар ÿсĕмсем турĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсенчен нумайăшĕсем чугун çул транспортне япăх пулăшса тăраççĕ. Уйрăмах кунта чугун çул транспортне пулăшас енĕпе Вăрмар, Вăрнар райкомĕсемпе Канаш горкомĕ лайăх ĕçленине палăртмалла.

ВКП(б) Вăрмар райкомĕ колхозниксене чугун çул юсанă çĕрте, чугун çулсене юртан тасатнă, шывран сыхланă çĕрте ĕçлеме вăхăтра мобилизацилет. Çавна пула ку район территорине кĕрекен чугун çул çинче çул юсавлă мар пулнă пирки поездсем чарăнса ларни пачах та пулман. Чугун çула пулăшас тĕлĕшпе «Дружба» колхоз (председателĕ Григорьев юлташ) лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăл колхозăн членĕсем хĕллехипе çуркунехи вăхăтра чугун çул çинче 2.200 ĕçкунĕ тунă. Сил-тăманлă çанталăк вăхăтĕнче çав колхозран чугун çул çинче ĕçлеме 60—80 çынтан тăракан бригадăсем тухнă. Чугун çул транспортне лайăх пулăшнăшăн Григорьев юлташа Хусан чугун çул управленийĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Чугун çул работникĕсем умĕнче Куславкка районĕ пысăк парăма кĕнĕ. Тĕрлемес станцинчи çулсене час-часах юр хÿтерсе кайнисем пулнă. Юр нумай тултарнипе вагонсем рельсăсем çинчен сиксе кайнисем те пулнă. Тĕлĕнмелле, сил-тăманлă çанталăксем вăхăтĕнче Куславкка районĕнчи чугун çул работникĕсене пулăшма Вăрмар колхозникĕсем пынă. Куславкка райкомĕн тата унăн секретарĕн Грючков юлташăн чугун çула пулăшасси парти организацийĕн кисеплĕ задачи пулса тăнине ăнланса илес пулать.

Чугун çул транспорчĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Груусем турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен 3-мĕш отделени (начальникĕ Вавилов юлташ) май уйăхĕнче таварсем тиемелли плана 91 процент çеç тултарнă. Вагонсем ахаль тăни та нормăпа пăхнинчен ытларах пулнă. Поездсене çÿретмелли расписанисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртмеççĕ. Улатăр деповĕнчи паровозсем талăкра 286 километр çÿрес вырăнне 184 километр çеç çÿреççĕ т. ыт. те.

Канаш станцийĕ чылай вăхăт хушши ĕнтĕ Хусан чугун çулĕ çинчи станцисем хушшинче юлашки вырăнта тăрать. Унта поездсене çÿретмелли расписание нормăмаях пăсаççĕ. Вагонсем нормăпа пăхнинчен икĕ хут ытларах ахаль тăраççĕ.

Транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пирĕн пур условисем те пур. Вăл условисемпе пурнине те усă курмалла. Районсенчи тата транспортри парторганизацисен, партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатса пырса, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, чугун çул работникĕсем хушшинче çар дисциплинине çирĕплетсе пырса, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн приказĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Çакă вăл пирĕн транспорта лайăх ĕçлеме тата государство планне пур тĕлĕшпе те ăнăçлăн тултарса пыма май парать.

Шывçул транспорчĕ пирки калас пулсан, çакна палăртмалла: иртнĕ çулта Сăрă шывĕ çинчи агентство та, Атăл çинчи пристаньсем те навигаци планне начар мар пурнăçа кĕртрĕç. Сăрă çинчи агентство кăçалхи навигацие те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ.

Атăл çинче навигаци малтанхи кунĕсенче чылай суднăсем, вĕсене вăхăтра юсаман пирки, çитешексĕр ĕçлерĕ. Шупашкар пристанĕн руководителĕсем Атăл урлă каçармаллине тивĕçлипе организацилемен. Ун çинчен «Правда» хаçатра тĕрĕс çырнăччĕ. Транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех шута илсе, вĕсене пĕтĕмпех пĕтермелле.

Груусене вăхăтра тиес тата пушатас ĕç çине тимсĕр пăхнине тĕпренех пĕтермелле. Шывçул транспорчĕпе туллин усă курмалла тăвас пулать.

Пысăк мар шывсем тăрăх груусем турттарас ĕçе организацилесси, çăмăл груз тиесе турттармалли флот тăвасси тата унпа усă курасси çинчен СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени хуçалăхра пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав постановление пурнăçа кĕртессишĕн хуçалăх организацийĕсен те, партипе совет организацийĕсен те тимлĕн ĕçлемелле.

ПЕРЕКЕТЛĔХ РЕЖИМНЕ ÇИРĔППĔН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕ мĕнпур парторганизацисем умне тата промышленноçпа транспорт работникĕсем умне çакăн пек задача лартрĕ: туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне пĕр чарăнмасăр йÿнетсе пымалла, хозрасчета пур майсемпе те çирĕплетмелле, пурлăха салатассине тĕпренех пĕтерсе хартмалла.

Вăрçă вăхăтĕнче продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес ыйту уйрăмăнах кирлĕ ыйту пулса тăрать. Продукци хакне йÿнетни — фронта тÿрремĕнех пулăшни пулать. Пурлăха салатни — тăван çĕршыв умĕнче йывăр преступлени туни пулать. Кăшт çеç, пĕрер тенкĕн, пĕрер пусăн перекетлесе пыни те пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче вăрçă расхочĕсемпе çĕнĕ строительство валли миллионшар, миллиардшар тенкĕ укçа пухса пама май парать. Апла пулин те, пирĕн предприятисенче пурлăха салатнисене тата тирпейсĕр тыткаланисене сахал мар тĕл пулма пулать-ха.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес ĕç çине тимсĕррĕн пăхнипе пула, кăçалхи март уйăхĕнче продукци хакĕ 16 процент ÿснĕ. Çавăн пекех Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен тата «Большевик» заводсенче те пĕрремĕш кварталта продукци хакне йÿнетес вырăнне ÿстерни палăрать.

Совет хуçалăхне йĕркелес ĕçри тĕп меслет вăл хозрасчет пулса тăрать. Хозрасчетсăр пĕр предприяти те тупăшлă ĕçлеме пултараймасть. Хозрасчета тытса пырасси — предприятисемпе парторганизаци руководителĕсен кисеплĕ задачи.

Предприятисен планне тултарас тата продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес ĕçре чĕртаварсемпе материалсем, электроэнергипе топливо расходламалли нормăсене пăхăнса ĕçлени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра 1943 çулта 60.000 киловат-сехет электроэнерги перекетленĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр предприятисенче топливо ытлашши расходлани те пулнă. Çапла Улатăрти паровозсем юсакан заводра 1943 çулта 60.000 тенкĕлĕх топливо ытлашши расходласа пĕтернĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводра производствăра брак тунă пирки çултан çулах тăкаксем нумай пулаççĕ. 1943 çулта пĕтĕмпех брак пулнă изделисемпе полуфабрикатсем 3 миллион тенкĕлĕх ытла шутланнă. Станоксем простой тунипе завод питĕ нумай тăкак тÿсет. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче çав тăкаксем 100.000 станок-сехет чухлĕ шутланаççĕ. Çав вăхăтра станоксемпе пĕр миллион тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларма май пулнă.

Производствăра брак тунине хирĕç татăклăн кĕрешмелле, брак тăвассине пĕтĕмпех пĕтермелле.

Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли çăлкуçсенчен пĕри вăл изобретательствăпа рационализаци ĕçĕ пулса тăрать. Анчах та пирĕн предприятисенче çав ĕçе тивĕçлипе сарса пымаççĕ. Ку енĕпе хуçалăх организацийĕсен нумай тата тимлĕн ĕçлемелле.

Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетесси тата перекетлĕх режимне çирĕп пурнăçа кĕртсе пырасси пĕтĕм ĕçĕн тĕп никĕсĕ пулмалла. Çав задачăна тимлĕн пурнăçа кĕртсе пыни хамăр çĕршывăн вăрçăпа экономика хăватне малалла ÿстерсе пыма май парать.

ПУР ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ ТЕ ПОТОЧНĂЙ МЕТОДПА ĔÇЛЕССИНЕ ЙĔРКЕЛЕР

Пирĕн промышленность предприятийĕсенчи пысăк резервсемпе производствăри технологи процесне тĕрĕс организацилесен кăна туллин усă курма пулать. Производство технологине лайăх организацилемелли çĕнĕ форма вăл производствăна поточнăй методпа организацилени пулать. Пирĕн республикăри хăшпĕр предприятисенче поточнăй методпа ĕçлеме тытăнни продукци кăларассине ÿстерме, производствăра ĕçлекен рабочисен йышне чакарма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетме тата унăн пахалăхне лайăхлатма май пачĕ.

Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра поточнăй методпа ĕçлеме тытăннă хыççăн ĕçсем чылай аванланчĕç. Завод продукци туса кăларассине ÿстерчĕ, унăн пахалăхне лайăхлатрĕ. Халĕ вăл графикпа тĕрĕс пăхăнса ĕçлет. Заводра пĕр рабочи пуçне продукци туса кăларасси 1944 çулхи январь уйăхĕнче, 1943 çулхи январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 264 процент ÿснĕ. Продукцин хăйне ларакан хакĕ 58 процент йÿнеленĕ. Браксене пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтернĕ. Завод руководителĕсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем хăйсен умне продукци туса кăларассине виçĕ хут ÿстерес задача лартнă.

Завод кашни уйăхрах производство планне ирттерсе тултарать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти рете тухать.

Республикăри предприятисенче производствăна поточнăй метод çине куçарма кирлĕ условисем çителĕклĕ пур. Ку енĕпе чылай предприятисенче ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Анчах та производствăна поточнăй метод çине куçарас ĕçе пур çĕрте те тимлĕн организацилемеççĕ-ха.

Предприятисенчи парторганизацисен çак тĕлĕшпе халех ĕçе тытăнмалла. Поточнăй метода ĕçе кĕртесси предприятисенчи парторганизацисен кулленхи ĕçĕн тĕп никĕсĕ пулмалла.

ТРАКТОРСЕМПЕ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕМ ВАЛЛИ ЗАПАСЛĂ ПАЙСЕМ ТУМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРМАЛЛА

Республикăри предприятисем, хăйсен государство планне тултарнипе пĕрлех, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса парас енĕпе те социализмлă ялхуçалăхне пулăшма тивĕçлĕ. Çак кирлĕ задание пурнăçа кĕртменни çĕршывăн оборона тĕрекне хавшатни пулать.

Анчах та хăшпĕр предприятисен руководителĕсем çав ĕç государствăшăн питех те кирлĕ ĕç пулса тăнине ăнланса илмен-ха. Тракторсем тата машинăсем валли запаслă пайсем тумалли пĕрремĕш кварталти плана 43 процент, иккĕмĕш кварталăн икĕ уйăхĕнчи плана 15 процент çеç тултарнă.

Андреев юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод кăçал пĕр запаслă пай та туман. Апла пулин те çав ĕçе партин хула комитечĕ те хутшăнман.

Тракторсемпе машинăсем валли запаслă пайсем тумалли иккĕмĕш кварталти задание Володин, Слуцкий юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен тата «Большевик» заводсем, вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ начар пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Предприяти руководителĕсенчен çав кирлĕ задание пурнăçа кĕртме ыйтас пулать. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем çав ĕç мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине хăйсен куллен тĕрĕслесе тăмалла.

ЭЛЕКТРОЭНЕРГИ ÇИТЕЛĔКЛĔ ПАРСА ТĂРАС ЫЙТУ

Промышленность ÿссе пынă май электроэнерги те ытларах кирлĕ пулса тăчĕ. Электроэнерги парса тăрас ыйту уйрăмăнах Шупашкар хулинче çивĕччĕн тăрать. Шупашкарти электростанци 1943 çулта электроэнерги памалли плана 68 процент çеç тултарнă. Электроэнерги çителĕклĕ пулман пирки хулари предприятисем государствăна нумай миллион тенкĕлĕх продукци параймарĕç.

Электростанци кăçал та хăйĕн ĕçне лайăхлатман, электроэнерги туса кăлармалли пилĕк уйăхри плана 83,2 процент çеç тултарнă.

Электростанци начар ĕçлени, тĕпрен илсен, унăн руководителĕсем çаврăнăçусăр та ответлăха туймасăр ĕçленинчен килет. Электростанцине татти-сыпписĕр, лайăх ĕçлеттерес тĕлĕшпе Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ те татăклă мерăсем йышăнман.

Партин Шупашкар хулинчи организацийĕн задачи — электростанцине лайăх ĕçлекен тăвасси пулать. Çавăнпа пĕрлех электроэнергие перекетлĕн тыткаланине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла.

Вăхăта вăраха ямасăр Атăл леш енчи электростанцине ĕçлеме чăрмантаракан çитменлĕхсене пĕтермелле, унăн пĕтĕм вăйĕпе усă курмалла тăвас пулать. Электростанцине торф парса тăракан предприяти ĕçне лайăхлатмалла. Районсен торф предприятине кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ памалла.

* * *

Кашни предприятире продукци туса кăларассине ÿстерме татăклă мерăсем йышăнмалла.

Кадрсем, квалификациллĕ рабочисем хатĕрлессишĕн пĕтĕм тимлĕхе хурса тăрăшмалла. Вĕсем валли тухăçлă ĕçлеме мĕнпур условисене туса памалла. Уйрăмăнах культурăпа йăла условийĕсене тата апат-çимĕç тăратас ĕçе лайăхлатасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Стахановла ĕçĕн коллективлă шкулĕ тата çамрăксен шкулĕ пулса тăракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисен юхăмне анлăн сарса пымалла. Фронтовой бригадăсен опычĕсемпе мĕнпур рабочисене паллаштармалла.

Парти организацийĕсен партиллĕ-политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Ку ĕçре пуçламĕш парторганизацисем татăклă вырăн йышăнса тăраççĕ. Коммунистсен хăйсен примерĕпе тата хавхалантаракан большевикла тĕрĕс сăмахĕсемпе бригадăсен, цехсен, предприятисен коллективĕсене производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тума мобилизацилемелле.

* * *

Пирĕн çĕршыв аслă событисем умĕнче тăрать. Хĕрлĕ Çар, хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса çитерес, аманнă нимĕç тискер кайăкне йĕрлесе пырса хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкас тесе, хăйĕн пĕтĕм хăвачĕпе тăшмана пĕтермеллех пырса çапас кун инçе мар ĕнтĕ.

Промышленноçпа транспорт работникĕсен задачи — хăйсен пĕтĕм вăйĕсене хурса хамăр предприятисенчи техникăпа туллин усă курасси, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа тыл ыйтăвĕсене тивĕçтерме продукци туса кăларассине икĕ-виçĕ хут ÿстересси пулать.

Эппин республикăри промышленноçăн ĕçне тĕпренех лайăхлатма тивĕçлĕ. Предприятисенчи хуçалăхпа парторганизаци руководителĕсен тата пĕтĕм парти организацийĕсен чысĕ — пирĕн мĕнпур предприятисене, пысăккисене те, пĕчĕккисене те, фронт интересĕсем, фашистла нимĕç оккупанчĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкас ĕçĕн интересĕсем ыйтнă пек ĕçлемелле тăвасси пулать.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Котантен çурутравне тĕпĕнчен савăлласа çурса пăрахнă вырăн çирĕпленсе, аслăланса пырать. Тилли-Сюр-Сель хули районĕнче пирĕн çарсен атакисене хирĕç тăшман танкĕсемпе пехоти вăйлă çапăçаççĕ. Тăшмана йывăр артиллери пулăшса тăрать. Ку вырăнтан хĕвелтухăçнерехре тăшманăн пĕр пысăках мар контратакине сирсе янă.

Акăлчансен «Ремиллиес» ятлă линкорĕ çинчи артиллерийĕ тăшманăн Ульгатри (Уйстргэмран хĕвелтухăçнерехре) батарейине пусарса лартнă.

Ĕнер кăнтăрла иртсен пăсăлса кайнă çанталăк паянхи ирччĕнех пынă, çавăнпа çапăçусен районĕнче пирĕн авиаци вăйлах кĕрешеймен. Çапах та чылай участоксенче тăшман çарĕсем çине тата унăн вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем чылаях нумай тăкнă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен Котантен çурутравĕ çинчи позицийĕсем, тĕллĕн-тĕллĕн малалла куçнипе çирĕпленчĕç. Тилли-Сюр-Сель хули патĕнче тăшман атакисене сирсе янă. Халĕ унта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кан хули районĕнче тăшман артиллерийĕ чылай вăйлăрах пеме пуçланă.

Союзниксен çар карапĕсем ĕнер кунĕпех хĕвелтухăç енчи фланга пулăшса тăнă, вĕсем тăшманăн куçса çÿрекен батарейисене персе тăнă. Кан хулинчен çурçĕртерехре акăлчансен «Дайэдэм» ятлă карапĕ тăшман танкĕсем пухăнса тăнă вырăна ăнăçлă персе илнĕ.

Июнĕн 19-мĕшĕнче ирхине начар çанталăк союзниксен авиацине кĕрешме хытă кансĕрленĕ, йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Па-де-Кале районĕнче нимĕçсен летчиксемсĕр çапăçакан самолечĕсен базисене тата Кăнтăр-хĕвеланăç Францири аэродромсене тапăннă. 7 бомбардировщикпе 16 истребитель хăйсен базисене таврăнман».

Француз партизанĕсен ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Францин çурçĕр пайĕнче партизансем чугун çулсене нумай тĕлте татнă. Нимĕçсем, опорнăй пунктсенчи гарнизонĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассинчен хăраса, хăйсен çарĕсене Тури Савойăран илсе кайнă. Хăшпĕр районсене партизансем пĕтĕмпех хăйсем контроллесе тăраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, партизансен 500 çынтан тăракан отрячĕ нумаях пулмасть Тури Пиреней департаментĕнче Тарб хулине йышăннă. Нимĕçсем, танксемпе тата артиллерипе усă курса, партизансене хирĕç хаяр контратака тунă. Патриотсем Тарб хулинче арсенала, авиаци моторĕсен заводне тата вăрçăшăн паха пулса тăракан предприятисене пурне те çунтарса янă та, 300 нимĕçе тыткăна илсе, каялла чакнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ НИМĔÇСЕН БУЛОНЬРИ СУДНИСЕНЕ ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНТЕРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 17-мĕшĕнче каçхине Англи бомбардировщикĕсем нимĕçсен Булоньри суднисене тапăннă. Булоньре тăнă 9 торпеднăй катера шыва путарнă пулмалла, ытти 13 суднине сиенленĕ. Çыран хĕрринчи темиçе çурта ишсе антарнă. Тинĕс вокзалĕпе центральнăй вокзала тата таможня çуртне сиенленĕ. Бомба тÿррех пырса тивнипе арсенала пĕтерсе лартнă. Катерсем разведчиксем валли бетонран тунă çивиттине темиçе бомба тÿрех пырса тивни паллă пулнă.

Çак тапăну вăхăтĕнче 1.300 тонна ытла бомба пăрахнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнче союзниксен çарĕсем вирлĕн наступлени туса пынă.

Фронтăн Адриатика тинĕсĕ çумĕнчи участокĕнче союзниксен çарĕсем Терамо хулине хăйсен аллинче тытса тăракан партизансемпе çыхăннă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Терни хулинчен питĕ хăвăрт малалла куçнă та Сполето, Треви, Фолиньо хулисене тытса илнĕ. Унтан хĕвеланăçнерехре союзниксен малти чаçĕсем Орвието хулинчен 20 километр çурçĕртерехре тăраççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем фронтăн хăйсем йышăнса тăракан пĕтĕм участокĕнче малалла куçнă. Халăх пурăнакан темиçе пункта тата Гроссето хулине туртса илнĕ. Гроссето хули вăл паха хула, унăн пысăк аэродром пур, çав аэродром тăшманăн бомбардировочнăй авиацийĕн тĕп бази пулнă.

Союзниксен бомбардировщикĕсем тăшман çарĕсене тата унăн вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Истребительсем Югославире тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене атакăланă, автомашинăсем нумай пĕтерсе тăкнă.

Кун каçиччен тăшманăн 70 самолетне персе ÿкернĕ. Союзниксен 21 самолет пĕтнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Аппенин тăвĕсенчен хĕвеланăçнерехри районра тăшман хирĕç тăрса çапăçасси вăйланса пырать пулин те, союзниксен çарĕсем унта çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. 5-мĕш арми чаçĕсем Фолиньо хулинчен çурçĕрелле куçса пыраççĕ, вĕсем ĕнтĕ Перудже хули патне çывăхараççĕ.

Начар çанталăк тата çумăрсем çуса тăни авиаци ĕçĕсене кансĕрлесе тăнă.

ЛОНДОН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: вăйлă çумăрсем мĕнпур фрончĕпех çулсăр вырăнсемпе малалла куçма чарса тăнă. Çапах та чылай участоксенче хаяр çапăçусем пынă. Фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен çарĕсем каллех малалла куçнă, халĕ вĕсем Тронто шывĕ патне çывăхарса пыраççĕ. Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн çарĕсем Ассизи хулине туртса илнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшмана паха оборона позицийĕсенчен хĕссе кăларнă, фронтăн тинĕс хĕрринчи участокĕнче Кампаньятико хулине туртса илнĕ.

Авиаци тăшман çарĕсене тата унăн Италири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн кăнтăр Францири тата Югославири çулйĕрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Эльба утравĕ çинче кĕрешекен француз çарĕсем, нимĕçсем хытă тăраççĕ пулин те, самаях пысăк çитĕнÿсем тунă, халĕ вĕсем утравăн пысăк пайне тытса илнĕ. Темиçе çĕр çынна тыткăна илнĕ.

ФРАНЦУЗСЕМ ПИАНОЗА УТРАВНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, француз çарĕсем июнĕн 17-мĕшĕнче каçхине Пианоза утравне йышăннă. Тыткăна илнисем пур. Пианоза утравĕ Эльба утравĕн хĕвеланăç хĕрринчен 8 миля кăнтăралларахра.

ЮГОСЛАВИ ХАЛĂХНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН КОМИТЕТПА ЮГОСЛАВИН КОРОЛЬ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТУНĂ КИЛĔШУ

КАИР, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Çĕнĕ Югослави» (Танюг) ятлă телеграф агентстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: «1944 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 17-мĕшне çитиччен Югославин ирĕке кăларнă территорийĕнче Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн председателĕпе Иосип Броз-Тито маршалпа король правительствин председателĕ доктор Иван Шубашич господин пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçнă.

Çав калаçусене Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн тата фашизма хирĕçле вече президиумĕн темиçе членĕ хутшăннă. Çав калаçусенче икĕ енĕ те Югослави халăхĕсен ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕвне вăйлатассăшăн пулни тата халăх вăйĕсене ытларах пĕрлештерме тăрăшни паллă пулнă. Нумай ыйтусемпе калаçса татăлнă. Çакă вăл пире союзниксемпе çирĕпрех çыхăнма тата Югослави халăхĕсене хăйсен тăван çĕршывне часрах ирĕке кăларма пулăшĕ».

НИМĔÇСЕН РАДИОПА ЕРТСЕ ПЫРАКАН САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян общинăсен палатинче шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕ Герберт Моррисон çапла каланă: нимĕçсем Англие хирĕç аякран радиопа ертсе пыракан самолетсемпе усă курма тытăнчĕç. Çавăн пек самолет-снарядсен пĕр пĕчĕк ушкăнĕ Англие июнĕн 13-мĕшĕнче ирхине тапăннă. Вĕсем пĕр-пĕринчен темĕн чухлех инçетре выртакан пунктсенче ÿкнĕ. Çавăн пек самолетсем Англие июнĕн 16-мĕшĕнче ирхине тапăннă чухне чылай йышлăн пулнă. Малтанхи хутĕнче вилнисемпе аманнисем нумай пулман, ытти сиен те пысăках пулман, мĕншĕн тесен тапăнасса та ун чухне вăйлă тапăнман. Июнĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вара вăйлăрах тапăннă.

Моррисон çапла каланă: пирĕн алăри даннăйсем кăтартнă тăрăх, Германин çак çĕнĕ хĕçпăшалне ытлашши пысăка хума сăлтав çук. Нимĕçсен çак çĕнĕ самолечĕсене хирĕç тĕрлĕ мерăсем йышăнатпăр, тенĕ.

НИМĔÇСЕН РАДИОПА ЕРТСЕ ПЫРАКАН САМОЛЕЧĔСЕНЕ АНГЛИ ÇИЙĔНЧЕ ПĔТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, авторитетлă учрежденисем каласа панинчен çак лайăх паллă пулнă: нимĕçсен радиопа ертсе пыракан самолечĕсем Англи çине вĕçсе çитсен, вĕсенчен нумайĕшне сывлăшра зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

КĔСКЕН

* Кăнтăр Англин тĕрлĕ районĕсенче Германин самолет-снарячĕсемпе кĕрешме зенитнăй артиллерин çĕнĕ батарейисене вырнаçтарса лартнă. Çав батарейăсене пĕлсе вырнаçтарса лартнине пула, вĕсем тăшман самолечĕсене халăх пурăнакан районсене çитиччченех вăйлă пеме пултараççĕ. Зенитчиксене самолет-снарядсемпе кĕрешме пулăшакан çĕнĕ инструкцисем панă.

* Югославири партизансем Люблянпа Триест хушшинчи чугун çул çинче пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă. Çав чугун çулпа вара нумай вăхăтлăха çÿреме чарăннă. Çурçĕр Италире Германи çулйĕрĕсене пăснă пирки нимĕçсем юлашки вăхăтра хăйсен вăрçă хатĕрĕсене çав чугун çулпа турттарнă пулнă. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

Июнĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа

«БЕСПРИДАННИЦА»

ятлă саслă илемлĕ фильм кăтартать.

Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăваш АССР Наркомлесĕн «Чăвашлесдрев» трестне çакăн пек работниксем кирлĕ: йывăç çурас тата каскалас ĕçе пĕлекен инженерсемпе техниксем, главнăй механик, технормировани инженерĕ, главнăй бухгалтер, товаровед, шофер, конюх тата конторăра ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Чувашлесдрев.

Шупашкарти кинотеатра администратор, уборщица, дворник, художник кирлĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00204 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.